

# Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх

**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Елена Порфирьева**

## Тăрăшуллă Стекловсем пур енĕпе талантлă

**Вăрнар округĕ хăйĕн çирĕп те туслă çемйисемпе палăрса тăрать. Вĕсене чыс та мухтав. Аслă ăру хăйĕн пархатарлă кун-çулĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе çамрăк ăрăва паха тĕслĕх кăтартать, Тăван çĕршывăн чăн-чăн гражданинĕ пулса çитĕнме пулăшать. Акă, Вăрнарта пурăнакан Нэллипе Виталий Стекловсен çемйи ятлă-сумлисенчен пĕри. Тивĕçлĕ канура пулин те, ахаль лармаççĕ. Вĕсем пултаруллă, хастар, обществăлла ĕçсенчен нихăçан та пăрăнмаççĕ.**



Виталий Федоровичпа Нэлли Алексеевна мăнукĕпе – Иванпа.

Çемье пуçĕ – Виталий Федорович – талантлă художник та, йывăçран тĕрлĕ кӳлепе, савăт-сапа касса кăларакан маçтăр та. Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче, Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕнче, Вăрнарти историпе краеведени музейĕнче Виталий Стеклов ĕçĕсен куравĕ савăнăçлă лару-тăрура уçăлчĕ.

Мероприятие килнисене музей директорĕ Елена Шарипова хапăлласа кĕтсе илчĕ. Вăл ӳнерçĕ ĕçне пысăк хак пачĕ, Виталий Федорович «Чăвашăн пурнăç йĕрки» экспозицине хатĕрлеме хастар хутшăннине çирĕплетрĕ. Ӳнерçĕн тата ал маçтăрĕн пултарулăхне хаклакансен йышĕнче «Август» Фирмăн «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» филиалĕн социаллă тивĕçтерӳсен управленийĕн пуçлăхĕ Евгений Захаров, Федор Кузьмин таврапĕлӳçĕ, Сергей Васильев (Саманташ) поэт, Чăваш наци конгресĕн округри уйрăмĕн ертӳçи Вячеслав Алексеев, район пуçлăхĕнче ĕçленĕ Леонид Николаев тата ытти ятлă-сумлă хăнасем, унăн юлташĕсем, тăванĕсем пулчĕç. Пăртас шкулĕн ачисем куравпа кăсăклансах паллашрĕç.

Виталий Стеклов картинăсем «çырма», йывăçран кӳлепесем, эрешсем касса кăларма кунсерен хавхалану тупать. Куракансене пултаруллă çыннăн ĕçĕсем хытах кăсăклантарчĕç. Илемлĕхĕпе туртрĕç. Хитре пейзажсене, тавралăха еплерех ăста сăнарлать автор. Унăн картинисем «Çутçанталăка упрăр!» тесе чĕнеççĕ. «Экологи ырлăхĕ» наци проектне пурнăçа кĕртессипе тĕллевлĕ тăрăшма хавхалантараççĕ. Ăна Вăрнарти ача-пăча ӳнер шкулне çамрăк ăрăва вĕрентме чĕнчĕç. Калас пулать, Виталий Стекловăн педагогикăри стажĕ те пысăк.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Канашĕн 2004 çулхи çу уйăхĕн 6-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Виталий Федоровичăн йывăçран касса тунă изделийĕсене пысăк хак парса ăна «Чăваш Республикин художество промыслисен мастерĕ» ят парса чысланă.



Йывăçран ăсталанă япаласем.

Виталий Стекловăн мăшăрĕ те Нэлли Алексеевна пултаруллă та хастар. Педагогра тăрăшнă чухне чылай ачана пĕлӳ тĕнчине илсе кĕнĕ. Пулас ăрăва пурнăç çулĕ çине тăратас тесе вăй-халне те, вăхăтне те шеллемен. Райĕçтăвкомра та тăрăшнă, халăх вĕрентĕвĕн пайĕн заведующийĕнче тата ытти яваплă ĕçре вăй хунă. ЧР Президенчĕ çумĕнчи хăйтытăмлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен канашăн членĕ пулнă. Хăйĕн тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă. Хальхи вăхăтра «Женский взгляд» хĕрарăмсен клубĕн канашĕн ертӳçи. Ал ĕçĕпе те аппаланать. «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатпа туслă çыхăну тытать.

Çемье вăл – общество ячейки, çирĕп тыл тата крепость. Кунта сана яланах кĕтеççĕ, йывăр чухне пулăшаççĕ. Стекловсем нумай çул пĕрпĕрне юратса тата килĕштерсе пурăнаççĕ, пушă вăхăта кăсăклă ирттереççĕ.

Искусствăна юратни ачисемпе мăнукĕсене те куçнă. Ывăлĕ те ашшĕ пекех художник. Сайра тĕл пулакан япаласене ăсталассипе ĕçлет. Çакăн йышши изделисене Раççейри туянакансем валли хатĕрлет. Виталий Федоровичăн хĕрĕ те пĕчĕкренех ӳнер тĕнчипе туслашнă. Республикăри конкурсра мала тухнă. Стекловсен кинĕ Ольга та талантлă. Чылай çул ачапча садĕнче музыка ертӳçинче тимлет. «Чи лайăх воспитатель» ята, Чăваш ен Президенчĕн грантне тивĕçнĕ.

Стекловсен тĕрлĕ ăрăвĕ хастарлăхпа палăрать, пуçаруллă утăмсем тăвать. Кашни ачан малашлăхĕ çемьепе çыхăннă. Мăнукĕсем те аслă ăрăвăн ятне ямаççĕ. Маттуррисенчен пĕри – Иван Рекаев. Хусанти архитектурăпа строительство университетĕнче пĕрремĕш курсра ăс пухать, «Архитектура» специальноçне алла илме ĕмĕтленет.

Стекловсем ытти çемьесемшĕн те тĕслĕх пулса тăраççĕ. Уйрăмах – çамрăк ăрушăн.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Вăрăм кун-çулăн вăрттăнлăхĕ



Мефодьевсем.

**Хурăнсур Çармăс ялĕнчи Галина Игнатьевнăпа Василий Мефодьевич Мефодьевсем ултă ача пăхса çитĕнтерсе çĕршыва юрăхлă çынсем тунă.**

Василий Мефодьевич колхозри яваплă ĕçсене пурнăçланă. Уйхир бригадирĕ, колхоз председателĕн заместителĕ, хуçалăх заведующийĕ, диспетчер, ферма заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Пенсие тухсан та колхозри ветерансен советне ертсе пынă. Тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Хисеп грамотисем, Правительствăн чылай медальне илме тивĕçнĕ.

Кил хуçи хĕрарăмĕ Галина Игнатьевна та ĕмĕрĕпех тăван колхозра вăй хунă: тырă вырнă, çаран çулнă, авăн çапнă, вăрман каснă, çăкăр пĕçернĕ. Пенсие тухас умĕн вара Хурăнсур Çармăс ялĕнче 13 çул почтальонкăра тимленĕ. Ахальтен мар Галина Игнатьевна, Василий Мефодьевич пекех, ял-йышра пысăк хисепре.

Мефодьевсен ачисем те хăйсем пекех ĕçчен те хастар çынсем пулса çитĕннĕ. Ултă ачаран пилĕк ывăлĕ – çар çыннисем. Кунашкалли, пĕр çемьери пилĕк ача офицер пулни, округра çук та пулĕ.

Василийпе Галина Мефодьевсем халĕ Хурăнсур Çармăсра иккĕшех пурăнаççĕ. Вĕсен хăтлă кил-çурт. Картишре чăхсем усраççĕ, пахча тулли çимĕç, сад пахчинче йывăççисем йăтайми улма-çырла çитĕнтереççĕ.

Василий Мефодьевичпа Галина Игнатьевна 70-мĕш çул пĕрле шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. Кил хуçи 96 çул тултарнă, мăшăрĕ вара 87 çулта. Апла пулин те хăйсене патвар тытаççĕ-ха. Ачисем ăслă-тăнлă çынсем пулса çитĕннĕшĕн чун-чĕререн савăнаççĕ. Ара, мĕнле савăнмăнха. Куç тулли ачисемпе 10 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнукĕ тăтăшах килсе çӳреççĕ, пысăк парнесемпе çитеççĕ, ашшĕ-амăшĕ те вĕсене нихăçан та кучченеççĕр кăларса ямасть.

Ăмсанаççĕ те, мухтанаççĕ те хурăнсур-çармăссем Мефодьевсен çемйипе. Çамрăксен вĕсенчен ырă тĕслĕх илмелли сахал мар.

## Мăн асатте – паттăр

**Халăх астăвăмĕ ламран лама, пĕр ăруран тепĕр ăрăва куçать. Эпир вăрçă участникĕсен кĕçĕн мăнукĕсем пулсан та иртнине манăçа кăлармастпăр. Ман тăвансем те Аслă Çĕнтерĕве çывхартас тесе хăйсен пурнăçне шеллемен. Акă, мăн асатте Василий Иванович Тикинев Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăнса мирлĕ вăхăтшăн нимĕç фашисчĕсемпе хăюллăн кĕрешнĕ.**



Вăл 1899 çулхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче илемлĕ ялта – Мăньял Хапăсра çуралнă. Хресчен çемйинче çут тĕнчене килнĕрен пĕчĕкренех ĕçе хăнăхнă. Ашшĕпе амăшĕшĕн çемье тĕрекĕ пулнă. Йăх-несĕлсен ятне яман.

Тур çырнине те тĕл пулнă. Ĕçчен те сăпайлă хĕрпе Аннăпа çемье чăмăртанă. Савнă мăшăрăн пепкесем пĕрин хыççăн тепри çут тĕнчене килнĕ. Пӳрт хаваслă ачапча сассипе тулнă.

Телее вăрçă татнă. Кĕçĕн ывăлĕ тăвата çулта чухне 1942 çулхи çуркунне мăн асаттен фронта кайма ят тухнă. Василий Иванович сапер пулнă.

Малтанах салтак тăван киле çырусем янă. Вăл юратнă мăшăрĕ, ачисем патне Çĕнтерӳпе таврăнасса шаннă. 1943 çулхи кăрлач уйăхĕнчен вара Чăваш ене çырусем килме пăрахнă. Вăл хыпарсăр çухални пирки пĕлтерӳ килнĕ.

Вăрçă çулĕсем кашни çемьере тӳрленми йĕр хăварнă. Паллах, çапла калаççĕ-ха: «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ». Маншăн Василий Тикинев чăн-чăн герой. Вăл пысăк наградăсене тивĕçме ĕлкĕреймен. Çапах та унпа эпĕ мăнаçланатăп. Вăл хаяр саманара пĕр утăм каялла чакман, тăшмана парăнман.

Василий Тикиневăн йăхне тăсакансем чылайăн. Вĕсем хушшинче ăста вĕрентекенсемпе медицина ĕçченĕсем, хăюллă çар служащийĕсем, пуçаруллă бизнесменсем, талантлă программистсем, хастар чемпионсем тата ытти сферăра, çав шутра ял хуçалăхĕнче, тăрăшса ырă ята тивĕçнисем те, пур.

**Александр ТИКИНЕВ,
Вăрнарти 1-мĕш шкул**